Канашсен Акатуйĕ юрă-ташăпа çĕç мар, спорт ăмăртăвĕпе те тулăх пулнă

**ЫРАНХИ КУН ПЫЛ ТУТИ КАЛАТĂР** 2

Иван Исаев министр: – Вăрмансăсен тивĕçĕ – вут-кăвартан сыхланасси, хунав лартса чĕртесси

**«ÇУТ ÇАНТАЛĂК» экологи кăларăмĕ** 3

Арçын ачан вăйлă пулмалла, Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме хатĕрленмелле

**АМĂШĔН МУХТАВĔ – ЫВĂЛĔСЕМ** 4

ПАЯН ВУЛĂР ТЕПĔР НОМЕРТЕ

Ял халăхĕшĕн тăрăшнине райпо хăйĕн тивĕçĕ вырăнне хурать

**ÇĔНĔ ТЕХНОЛОГИСЕМ ÇĔНĔ ХĂВАТ ХУШАÇÇĔ** 2

Ватлăх кунĕсенче пĕччен пурăнма кичем. Чуна уçса калаçма çын кирлех

**«АРÇЫНПА ХĔРАРĂМ» страница** 3

Чăваш кинематографисчĕсен пĕрлĕхĕн ертӳçи Олег Цыпленков: «Пултаруллă çынсем, республикăра пулса иртекен паллă пулăмсем пирки ытларах ӳкермелле» 4


чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

# ХЫПАР



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

102 /26508/ № Ытлари кун, 2014, çĕртме (июнь), 3 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru


## Ачасен хăрушсăрлăхне тивĕçтермелле

***Утă уйăхĕн 2-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ республика Правительствин членĕсемпе, ĕç тăвакан влаç органĕсен, федерацин вырăнти тытăмĕсен тата хула округĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.***

Михаил Игнатьев çу уйăхĕн 30-мĕшĕнче 2015 çулта Шупашкар хулинче тата Канаш районĕнче Республика Кунĕн тĕп мероприятийĕсене ирттересси çинчен калакан указа алă пуснине пĕлтернĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ уяв мероприятийĕсене хатĕрленессине планпа килĕшӳллĕн пуçăнма чĕнсе каланă.

ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова ачасем тата тин çуралнă пепкесем вилесрен асăрхаттарас енĕпе ведомствăсен хушшинчи ĕçе мĕнлерех йĕркеленине пĕлтернĕ. Социаллă, медицина, вĕренӳ тата ытти пĕлтерĕшлĕ йĕркелӳ тата практика мерисем 2014 çулхи кăрлач-ака уйăхĕсенче 2013 çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан 0-17 çулсенчи ачасем вилнин кăтартăвĕсене – 22,9%, тин çуралнисенне 28,3% чакарма май панă. Тин çуралнă ачасем вилнин кăтартăвĕпе республика федерацин ăнăçлă субъекчĕсен шутне кĕрет, федерацин Атăлçи округĕнче – пĕрремĕш, Раççей Федерацийĕнче виççĕмĕш вырăнсене йышăнать.

Çавăнпа пĕрлех ачасем вилнĕ тĕслĕхсем ытларах чухне вĕсене тивĕçлипе пăхманнипе çыхăннă. 2014 çулхи çу уйăхĕн 29-мĕшĕ тĕлне пушара пула 6 ача вилнĕ, шыв объекчĕсенче ачасем пурнăçран уйрăлнă 2 тĕслĕхе регистрациленĕ. 2014 çулта çул çитменнисем çӳллĕ вырăнтан ӳкнĕ 7 тĕслĕхе шута илнĕ.

Кăтартусем лайăх енне улшăннă пулин те яваплă çынсен ачасен хăрушсăрлăхне тивĕçтерме, лару-тăрăва йĕркелеме хушма мерăсем йышăнмалла, тенĕ республика Пуçлăхĕ.

Канашлăва хутшăннисем Шупашкарти «Раççей регионĕсем – ăнăçлă аталану» VII экономика форумне мĕнле хатĕрленнине сӳтсе явнă.

Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин Чăваш Ен делегацийĕ Беларуç Республикине кайса килнине пĕтĕмлетнĕ. Республика делегацийĕ Беларуçре çу уйăхĕн 25-28-мĕшĕсенче пулнă. Промышленноç, агропромышленноç ыйтăвĕсемпе, культурăпа вĕренӳ тытăмĕнче ĕçлĕ тĕл пулусем иртнĕ. Делегаци йышĕнчи çынсем Беларуçри предприятисемпе, пулăшу ĕçĕсемпе, çыхăну тытмалли малашлăхпа паллашма пултарнă.

Канашлăва хутшăннисем çавăн пекех Чăваш Ен территорийĕнче шăрăх çанталăк вăхăтĕнчи пушар хăрушсăрлăхĕн мерисене, Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕсене, спорт ăмăртăвĕсене еплерех хатĕрленсе йĕркеленине сӳтсе явнă.

■ **А.КУЗНЕЦОВА**

*Вĕренӳ*

# Професси ăсталăхне тĕрĕслеме – Шупашкара



***К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн курав залĕ лăк тулли. Çук, хальхинче премьера мар кунта. Вăтам професси пĕлĕвĕ илекен студентсен хушшинче иртекен Професси ăсталăхĕн Пĕтĕм Раççей олимпиадин пĕтĕмлетӳ тапхăрне çапла савăнăçлă лару-тăрура уçрĕç. Федерацин 9 округĕнчен, 50 регионĕнчен асăннă тупăшăвăн вырăнти тапхăрĕн çĕнтерӳçисемпе вĕрентекенĕсем çитрĕç Шупашкара.***



сар.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕсем

Олимпиада пĕтĕмлетĕвĕ пирĕн республикăра иртнин хăйĕн сăлтавĕ: регионсенчи çĕнтерӳçĕсене пĕлӳ чи лайăх паракан, пурлăхпа техника пуян никĕсĕллĕ, меслетлĕх енчен вăйлă службăллă организацисем çеç йышăнаççĕ. Ун пеккисен ятне кăçал Шупашкарти электротехника колледжĕ тата Шупашкарти строительствăпа хула хуçалăхĕн техникумĕ тивĕçрĕç.

Уява Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев уçрĕ.

– Паянхи ĕç рынокĕнче вăтам професси пĕлĕвĕллĕ ăста специалистсем кирли куç кĕрет. Пирĕн республика радиоэлектроника, реле призводстви, строительство енĕпе курăмлăн ĕçлет. Çĕр айĕнчи пуянлăхпа мухтанаймастпăр та – хамăрăн ăста та пултаруллă, хăйсен профессине чунтан парăннă çынсемпе мăнаçланма вара тивĕçлипех пултаратпăр. Паян кунта ларакан кашни студент – хăйĕн регионĕн мухтавĕ-чапĕ. Тата пурте эсир халех – çĕнтерӳçĕсем, хăвăрăн тантăшăрсен хушшинче вырăнта палăрнăскерсем. Анчах кирек мĕнле тупăшура та вăйлисенчен те вăйлăраххи çиеле тухать. Ăнăçу, эппин, пурне те! – хавхалантарчĕ Раççейри тĕрлĕ колледж-техникумра ăс пухакан çамрăксене Чăваш Ен ертӳçи.

Палăртма кăмăллă: олимпиадăн пĕтĕмлетӳ тапхăрне Крым тăрăхĕнчен те хăнасем килсе çитнĕ. Севастопольти техникумра вĕренекенпе унăн преподавателĕ хăйсене чăвашсем ăшшăн кĕтсе илнипе питех те кăмăллă.

Раççей Федерацийĕн Вĕренӳпе ăслăлăх министерствин представителĕ Юлия Коватева вара пирĕн республика ертӳлĕхне олимпиадăна хутшăнакан мĕн пур йышран тав турĕ:

– Шупашкар хули çакнашкал тупăшăва йĕркелесе ирттермелли центр вырăнĕнче пĕрремĕш хут кăна мар. Мĕншĕн çапла пулса пынине паян ăнлантăм: сирĕн тăрăхра вăтам професси пĕлĕвĕ тĕлĕшпе патшалăх ертӳлĕхĕ те тимлĕ-мĕн. Шансах тăратăп, ăмăртăва хутшăнакан яшсемпе хĕрсене кунта тунсăхлама вăхăт пулмĕ, вĕсен çул çӳревĕ кăсăклă экскурсисемпе тата ытти мероприятипе пуянланĕ. Шупашкарăн илемĕпе кам киленмĕ!

■ **Ирина ПУШКИНА**

## Михаил Игнатьев – «Линия власти» программăра

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Шупашкарти реабилитаци центрĕнче пулнă, унта сипленекен ачасен пултарулăхĕпе паллашнă, вĕсен малашлăх планĕсем çинчен ыйтса пĕлнĕ. Кунтах Михаил Васильевич нумай ачаллă ашшĕ-амăшĕпе курнăçнă. «Çавра сĕтел» хушшинче вĕсене çĕр лаптăкĕсемпе, ачасене лагерьсене ямалли путевкăсемпе тивĕçтерессипе, ĕç тупассипе, спорт комплексĕсене çӳренĕ май çăмăллăхсемпе усă курассипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă.

Ачаллă çемьесем влаçсенчен мĕнле пулăшу кĕтеççĕ, республика вĕсене, çавăн пекех йывăр лару-тăрăва лекнĕ çемьесене мĕнле пулăшу кӳме пултарать? Чăваш Енре йĕркесĕр çемьесем сахалрах пулччăр тесе мĕн тăваççĕ? Çак тата ытти ыйту хуравĕсем – **«Раççей» телеканалăн паян, çĕртме уйăхĕн 3-мĕшĕнче, 9 сехетре эфира тухакан «Линия власти» программинче.**

### *Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕ*
### 2015 çулта Республика кунне ирттересси çинчен

Чăваш Республикин «Чăваш Республикин патшалăх уявĕ çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн муниципалитет пĕрлĕхĕсен социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне хавхалантарас, вĕсен инвестици илĕртӳлĕхне ӳстерес тĕллевпе **çапла йышăнатăп:**

1. 2015 çулта Республика кунне уявлассипе çыхăннă тĕп мероприятисене хатĕрленсе ирттерессине Шупашкар хулинче, çавăн пекех Республика кунне уявлассипе çыхăннă мероприятисене хăйсен территорийĕнче ирттермелли правăна çĕнсе илмелли Чăваш Республикин муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен конкурсĕнче çĕнтернĕ Канаш районĕнче йĕркелес.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн:

2015 çулта Республика кунне хатĕрленсе ирттерес енĕпе пурнăçламалли мероприятисен планне хатĕрлемелле тата çирĕплетмелле;

Канаш районне ялсен общество инфратытăмне аталантарма Чăваш Республикин Пуçлăхĕн грантне тӳлессине тивĕçтермелле.

3. Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене 2015 çулта йăлана кĕнĕ «Акатуй» уявĕсем, Республика кунне халалланă культмассăллă тата спорт мероприятийĕсем ирттерме сĕнес.

4. Çак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, çу, 30. 75 №.

**КУН хыççăн КУН** ☎ 56-04-26

## Патшалăх Думин дипломĕпе чысланă

***2013-2014 çулсенче вĕренӳ учрежденийĕсемпе ăслăлăх организацийĕсен хушшинче Пĕтĕм Раççейри «Манăн саккун» конкурс иртнĕ.***

Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думи тата Çамрăксен ăслăлăх, пултарулăх тата инновацилĕх ĕçне аталантарас енĕпе ĕçлекен наци системи пуçарнă конкурса вицĕ тапхăрпа йĕркеленĕ, чи пултаруллисене финала чĕннĕ. Вăл РФ Президенчĕн Ĕçлев управленийĕн кану çуртĕнче иртнĕ. Çамрăксен форумĕнче студентсемпе ăсчахсем хăйсен ĕçĕсемпе паллаштарнă. Унта Шупашкар коопераци институтĕнче вĕренекен пулас юрист Тимофей Спиридонов (ăслăлăх ертӳçи – юридици наукисен кандидачĕ Михаил Иванов) хутшăннă. Вăл коррупципе кĕрешес ыйтупа тухса калаçнă. Жюри членĕсем унăн ĕçне пысăк хак панă, I степень дипломпа чысланă.

**Е.АНДРЕЕВ.**

## Йышра – 38 спортсмен

***Раççейĕн пĕрлештернĕ командисене 2016 çулхи Олимп вăййисене хатĕрлес енĕпе ĕçлекен штаб ертӳçи, РФ спорт министрĕн çумĕ Павел Колобков тĕнчери чи пысăк ăмăртăва хутшăнма пултаракан спортсменсен списокне çирĕплетнĕ.***

Йышра – спортăн 35 енĕпе ăсталăха туптакан, тĕрлĕ чемпионатпа турнирта пысăк çитĕнӳсемпе палăрнă яшсемпе хĕрсем. 2013 çулхи кăтартусен пĕтĕмлетĕвĕпе кандидатсен списокне Чăваш Енĕн 38 спортсменĕ кĕнĕ. Вĕсен хушшинче – чи пултаруллă 4 велосипедçă: Ирина Калентьева, Кристина Кириллова, Вера Андреева, Ольга Терентьева; Владислав Поляшовпа Евгения Шелгунова гимнастсем, ыттисем – атлетсем. Малти ретре Лондонри Олимпиадăна хутшăннисем: марафон турнирĕн бронза призерĕ Татьяна Архипова, унăн тусĕ Альбина Майорова, нумай енлĕ кĕрешӳре вăй виçекен Кристина Савицкая, чупас енĕпе пысăк çитĕнӳсем тунă Елена Наговицына. Çавăн пекех Универсиада маттурĕсем Алина Прокопьева, Людмила Кузьмина, Марина Максимова та пур.

**А.МИХАЙЛОВ.**

## Путса вилнĕ

***Çу уйăхĕн 29-мĕшĕнче 13 сехетре Шупашкарти Çĕнĕ сала пляжĕнче инкек пулнă: 12 çулти арçын ача путса вилнĕ.***

Вăл тантăшĕсен ушкăнĕпе шыва кĕнĕ те пĕр вăхăтран куçран çухалнă. Каярахпа унăн кĕлеткине Атăлта, çыранран темиçе метрта, тупнă. Малтанласа палăртнă тăрăх – çул çитменскер шывра чыхăнса кайнă та путса вилнĕ. Хальхи вăхăтра инкек сăлтавне уçăмлатаççĕ. Раççей Следстви комитечĕн Чăваш Енри Следстви управленийĕн Шупашкар хулинчи уйрăмĕ çак факт тĕлĕшĕпе РФ УК 109 статйипе килĕшӳллĕн (асăрханмасăр вилĕм кӳни) уголовлă ĕç пуçарнă.

Çăлавçăсем шыва кĕнĕ чухне тимлĕрех те асăрхануллăрах пулма чĕнсе калаççĕ, аслисен ачасене куçран вĕçертмелле маррине аса илтереççĕ.

**И.НИКОЛАЕВА.**



ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# ÇУМĂР КĔТЕÇÇĔ – ЧӲК ИРТТЕРЕÇÇĔ

**Йăла-йĕрке пурăнсан ял пĕтмест. Ку чăнах та çапла. Юлашки çулсенче республикăри чылай хутлăхра ял кунне палăртма тытăнчĕç. Пĕрисем ăна – Çимĕкре, теприсем – Питравра, виççĕмĕшĕсем Илен кунĕнче е Сăпасра паллă тăваççĕ. Çав вăхăтрах Çуллахи Микулара праçнике пухăнакансем те пур. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Ачкасси ял тăрăхне кĕрекен Калкассисем, Ачкассисем тата Серенкассисем çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче уявра савăннă. Çуллахи тата Хĕллехи /раштавăн 19-мĕшĕнче пулать/ Микулана /пирĕн тăрăхра ăна Микулнă теççĕ/ ял халăхĕ пысăк праçник вырăнне хурать. Паллах, çуллахине анлăрах уявлаççĕ. Шупашкар районĕнчи Ишекре вара çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче çулсеренех Ишек ярмăркки иртет. Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнчи хăшпĕр ялта вара маларах Хĕллехи Микулана та уявланă. Шел те, юлашки вăхăтра ку йăла-йĕрке пĕтнĕ.**

**Çуллахи Микулнана халăхра Куракллă Микула, Ăшă Микула теççĕ. Çак кун çĕр çине ăшă анать-мĕн. Тĕрĕсрех каласан – çулла пуçланать. Çак кунран лашасене курăк çине кăларнă, шыва кĕме юранă. Унччен сурăх çăмне касма ирĕк паман. Куккук авăтма пуçлать. Чăпăл курăкĕ, кăвакарчăн куçĕ, хура çырла, хурăн çырли чечеке ларать. Çак кун шапа авăтсан – кăçал сĕлĕ ăнса пулать имĕш. Сăмах май, кăçал çу ир пуçланчĕ. Çу уйăхĕн 1-мĕшĕнчен шăпчăк юрлама, куккук авăтма тытăнчĕ. Çĕр ĕçченĕсем Çуллахи Микулари çанталăка та сăнанă. Çак кун шăрăх пулсан Хĕллехи Микула сивĕ килет тенĕ. Çапла вара Микулнăран çанталăк çу еннелле çавраннă, пурте çумăр кĕтнĕ. Çавăнпа ялсенче чӳксем ирттернĕ. Микул турра пуç çапнă, вăл выльăх-чĕрлĕхе, хурт-хăмăра упрать, çĕр ĕçченне пулăшать тесе ĕненнĕ. Микулнăра çумăр çунине питĕ лайăх паллă пек йышăннă.**

**Вăрнар тата Элĕк тăрăхĕнчи ялсенче паян та Микулнă ирттересси манăçман. Вăрнар районĕнчи Кивьялта, Кушар Юнтапара, Çĕньялта, Элĕк районĕнчи Пĕчĕк Кăканарта ăна ял ĕçки, халăх сăри теççĕ. Вăрнар хутлăхĕнчи Кăмпалта вара Микулнăна пухăнаççĕ. Шупашкар районĕнчи Сархурăнсем вара Сухати уявне – ака пăттине – паллă тăваççĕ. Çак йăла-йĕркене туса ирттернĕ чухне вĕсем пурте Микул турăран /Николай Чудотворец/ вут-кăвартан, çилтăвăлтан сыхлама ыйтаççĕ, тыр-пул, пахча çимĕç, ӳсен-тăран валли çумăр ярса пама тархаслаççĕ.**

**Пурте çак куна тĕплĕ хатĕрленеççĕ. Ятарласа сăра вĕретеççĕ, пăтă пĕçереççĕ. Кивьялсем кăпăш йăва, Кăмпалсем юсман янтăлаççĕ. Кивьялта çак йăла-йĕркене – вицĕ, Кăмпалта 5 çемье йĕркелесе, ертсе пырать. Кăçал эпĕ те Кăмпалсен уявне хутшăнтăм. Çу уйăхĕн 21-мĕшĕнче каç кӳлĕм вĕсем ял варринчи Микулнă вырăнне /маларах кунта хурал пӳрчĕ пулнă-мĕн/ вĕр çĕнĕ сĕтелпе вăрăм саксем вырнаçтарчĕç. Унтан ятарласа пĕçернĕ апат-çимĕçе лартрĕç. 5 çемье çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче халăхран кĕрпе, çăнăх, сахăр, çăмарта, хăмла, салат, тăвар, çу, вутă пухса çӳренĕ. 20-мĕшĕнче юсман пĕçернĕ, хуранпа сăра вĕретнĕ. 21-мĕшĕнче кунĕпе çӳхӳ, вĕтĕ кукăльсем, хуранпа пăтă янтăланă. Унта тĕрлĕ кĕрпе янă. Пăтта сĕтел çине лартнă чухне çиелтен туранă çăмарта сапаççĕ, çу яраççĕ. Уява пыракан кашни çыннах чăн малтан ывăçпа юсман параççĕ, алтăрпа сăра ĕçтереççĕ. Унтан хĕвел тухăçнелле пăхса сăх сăхнă хыççăн пăтă çиме лартаççĕ. «Кăçал çу чипер иртгĕр, çумăр çутăр, тыр-пул та, пахча çимĕç те ăнса пултăр», – теççĕ. Ун хыççăн ялти ватăсен пĕр ушкăнĕ нихăçан типмен çăл куç вырăнне – ял пуçĕнчи ула юпа патне, унтан ĕлĕк утар пулнă тĕле чӳк ирттерме каять. Çур çĕр варринче арçынсем Хирлеп хĕррине анаççĕ. Маларах хатĕрленĕ пĕчĕк кимĕ çине ял çыннисенчен пухнă им-çама /çӳпçапа çапла калаççĕ/ лартса яраççĕ. «Чир-чĕре ăсатрăмăр», – теççĕ вĕсем кун пирки. Чăн та, авалтан килекен, ламран-лама куçса пыракан йăла-йĕркене курма питĕ кăсăклă пулчĕ. Ахăртнех, ĕлĕкрех ял çыннисем Пӳлĕхçе пуç çапнă. Апла пулин те упраса хăварма пултарнă-ха ăна вĕсем. Маларах праçнике чăваш кĕписемпе, çăпатасемпе тухнине калаççĕ. Уяв валли çăкăра та килте пĕçернĕ. Халĕ çӳхӳ çинипех çырлахаççĕ. Чăваш тумне те тăхăнмаççĕ ĕнтĕ.**

**Апла пулин те Микулнана курма хуласенчен ятарласа килекенсем те пур. Кăмпалтан тухнисем ачисене, мăнукĕсене ертсе пыраççĕ. Çак уяв ял халăхне пĕрлештерет, çывăхрах пулма, пĕр-пĕринпе туслă пурăнма хистет. Микулнă Кăмпалсемшĕн ял кунĕпе /ял уявĕпе/ пĕр килет. Кунпа кăна çырлахмаççĕ вĕсем, çумăр вăрах вăхăт çумасан ялти шурăппасем ача-пăчана ертсе Хирлеп шывĕ хĕррине анаççĕ. Пăтă пĕçерсе чӳклеççĕ, шывпа сапмалла выляççĕ. Çумăр чӳкне ирттернин усси пурах теççĕ. Апла-и, капла-и – йăла-йĕрке упранса юлни паха. Ваттисем пурăннă чухне вĕсене тĕплĕн çырса юлсан аван та... Ку ĕçе шкул ачисене те явăçтарма пулать. Ахальтен-им ваттисем: «Пирĕнтен тухнă йăла мар, пирĕнпе ан вĕçлентĕрччĕ»,– теççĕ. Микулнана черетпе ирттерни ăна малалла тăсма пулăшать пулас. Ăна пăрахма пурте хăраççĕ. «Ара, çавсен тĕлне çитсен ку йăлана прахăçланă. Инкек-синкекшĕн вĕсем айăплă»,– теме пултарать-çке ял халăхĕ. Çапла, Кăмпалсемпе юсман çирĕмĕр, апла кĕçех çумăр пулать! Çапла пултăрччĕ!**

■ **Роза ВЛАСОВА**

Çанталăк çинчен

Паян уяр çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 28, çĕрле 16 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 760 мм, сывлăшри нӳрĕк 25 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 18 минут.**

Ыран хĕвеллĕ çанталăк пулать. Çил анăçран çеккунтра 1 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 29, çĕрле 16 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 759 мм, сывлăшри нӳрĕк 26 процент.

**Кун тăршшĕ 17 сехет те 21 минут.**

# Çăлтăрпа – зарядкăна

***Çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче, Ачасене хӳтĕлемелли Пĕтĕм тĕнчери кун, Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çăлтăрпа пĕрле ачасен ирхи зарядкине хутшăннă. Хĕрлĕ лапамра сывлăх уявĕ садиксенчи 15 пин ачана тата вĕсен ашшĕ-амăшне пухнă.***


cap.ru сăн ӳкерчĕкĕ

Республика Пуçлăхĕ пухăннисене пурне те ачасене хӳтĕлемелли кунпа саламланă, Чăваш Ен патшалăх политики ача амăшĕпе ачалăх институтне çирĕплетессине тĕпе хунине палăртнă. «Парксенче ашшĕ-амăшĕпе ачи уçăлса çӳренине курсан яланах савăнатăп, мĕншĕн тесен ача çуратасси модăна кĕрсе пырать – ку питĕ лайăх!» – тенĕ Михаил Игнатьев.

Ирхи зарядкăна фитнес-аэробика федерацийĕн ертӳçи Оксана Вербина тата хулари çамрăк спортсменсем – Раççей спорт мастерĕ, тĕнче класлă спорт мастерĕ, Европăн тăватă хут чемпионки тата тĕнчен икĕ хут чемпионки, штанга йăтас енĕпе Раççей рекордсменки Анастасия Петрова, тухăç кĕрешӳ мелĕсем енĕпе спорт мастерĕн кандидачĕ, çак енĕпе Пĕтĕм Раççейри ăмăртусен виçĕ хут призерĕ, каратэ енĕпе Раççейĕн нумай хут чемпионĕ тата призерĕ Евгений Краюшкин, командăсен хушшинче ухăран перес енĕпе тĕнчере мала тухмалли ăмăртăвăн кĕмĕл призерĕ, ухăран перессипе командăсен хушшинче çамрăксен Европа Кубокĕн пĕрремĕш тапхăрĕн çĕнтерӳçи Елена Елизарова – ирттернĕ.

■ **А.ВАСИЛЬЕВА**

*Лару*

# Тĕрĕслев чăрмав ан кӳтĕр

***Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçхĕлне сăнаса тата тĕрĕслесе тăракан ведомствăсен хушшинчи комиссийĕ хальхинче хăйĕн ларăвĕн кун йĕркине виçĕ ыйту кĕртнĕ: «2014 çулхи пĕрремĕш кварталта Роспотребнадзорăн Чăваш Енри управленийĕ тата Чăваш Республикин Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерстви ирттернĕ тĕрĕслевсен пĕтĕмлетĕвĕ çинчен», «Пушар хăрушлăхне чакарас тĕлĕшпе полномочи тивĕçĕсене мĕнле пурнăçлани тата малтан панă предписанисене пăхăнманнине пула пушар шучĕ ӳсни çинчен», «Тĕрĕслев органĕсемпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен çивĕчленнĕ ыйтăвĕсене татса пама йĕркеленĕ ведомствăсен хушшинчи мобильлĕ ушкăнсен ĕç-хĕлĕ çинчен».***

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынă ларăва республикăри Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен ĕç тăвакан канашĕн представителĕсемпе пĕрлех федерацин потребительсен прависен хӳтĕлекен сферăри службăн республикăри управленийĕн ертӳçи Надежда Луговская, федерацин Граждан оборонипе чрезвычайлă ларутăрăвăн министерствин республикăри тĕп управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ-сăнав ĕçхĕлĕн управленийĕн пуçлăхĕ Николай Петров полковник, вĕренӳ тата юстици министрĕсем Владимир Ивановпа Надежда Прокопьева, Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хула, Вăрнар, Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай тата Етĕрне район администрацийĕсен пуçлăхĕсем хутшăнчĕç.

Республикăри Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕн ĕç тăвакан директорĕ Станислав Николаев палăртнă тăрăх – çакăн усси ытларах та ытларах лайăхланни, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе тĕрĕслесе-сăнаса тăракан органсем пĕр-пĕрне ăнланса, пулăшса ĕçлеме тытăнни куç кĕрет. Акă кăçал Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕ пулăшнипе тĕрĕслевпе сăнав органĕсен специалисчĕсемпе пĕрле республикăри 5 зонăра район пуçлăхĕсемпе район администрацийĕсен пуçлăхĕсем валли семинарсем йĕркеленĕ. Вĕсенче ĕçри кăлтăксен, унчченхи йăнăшсен сăлтавĕсене сӳтсе явнă, вĕсенчен хăтăлмалли çул-йĕре палăртнă.

Раççей Федерацийĕн Регионсен аталанăвĕн министерстви пĕлтерни тăрăх хальхи вăхăтра вырăнти влаç тытăмĕсене 22 тĕрĕслевпе сăнав органĕ «куçран вĕçертмест», вĕсене ĕç-хĕлĕн 40 ытла енĕпе тĕрĕслет. Сăмахран, кăçалхи пĕрремĕш кварталта влаç тытăмне Россельхознадзор, Ростехнадзор, МЧС, прокуратура тата ытти сăнав органĕ тĕрĕсленĕ. Прокуратурăран кăна влаç тытăмне 1499 çырупа ыйту тата представлени килнĕ. Ытти тĕрĕслевпе сăнав органĕсенчен çитнисемпе пĕрле – 3236. «Ытла çине тăрса тĕрĕслени вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕç-хĕлне чылай чухне татах йывăрлатать, – терĕ Канашăн ĕç тăвакан директорĕ Станислав Николаев. – Вырăна тухса тĕрĕслесе кайран хурав хатĕрлесе вăхăт самай çухалать. Çавăнпа та пире пĕр-пĕрне ăнланса, пулăшса ĕçлени кирлĕ. «Сехĕрлентернĕ» чухне алă-ура та çыхланать...» Малашне текех çапла ан пултăр тесе ларăва хутшăннисем мĕн йышăнни çинчен «Хыпар» хаçатăн çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕнчи номерĕнчи «Вырăнти хăй тытăмлăх» кăларăмра тĕплĕнрех çырса пĕлтерĕпĕр.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

*Акатуй*

# Ыранхи кун пыл тути калатăр


cap.ru сăн ӳкерчĕкĕ

***Канашсем çурхи уй-хир ĕçĕсене иртерех пуçларĕç те – маларах вĕçлерĕç. Çакă Акатуй уявне те республикăра чи малтан ирттерме май пачĕ. Иртнĕ эрне кун юрă-ташăпа, спорт ăмăртăвĕсемпе, яланхи савăк кăмăлпа йыхравларĕ вăл халăха. Асхва ялĕ çывăхĕнчи "Тухăç" стадиона çитĕнӳсемсĕр епле пырса кĕрĕн?***

Тăрăшса вăй хунă кăçал хресченсем, пĕлтĕрхинчен аванрах ĕçленĕ. Çакна Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та палăртрĕ. Анчах та Канашсен малаллах пăхмалла, тата лайăхрах, пуянрах пурăнмалла. Килĕшеççĕ-и вĕсем çакăнпа? Иккĕленӳ çук – çапла. Аслă ертӳçĕне вĕсен хуравĕ тивĕçтерчĕ, çавăнпа вăл Шупашкара çитсенех Республика кунне çитес çул Канаш районĕнче ирттерме йышăннине çирĕплетекен Указа алă пусассине пĕлтерчĕ. Çакăншăн савăнмалла: сумлă чыса тивĕçнипе пĕрлех района хушма укçа-тенкĕ те çитĕ. Канашсен çитес çулхи уява яваплăха туйса тата та тăрăшуллăрах хатĕрленме тивет.

Çĕр ĕçченĕ ĕлĕк суха пуç тытнă, кĕреçепе сенĕке аларан яман. Халĕ пăх та кур: ял хуçалăх предприятийĕ-и е фермер хуçалăхĕ-и, е тата уйрăм çыннăн кил картишĕ-и – кашнинче хăватлă техника куратăн. Чи малтанах республика ертӳçи тата пĕрле килнĕ пысăк хăнасем – министрсем, Патшалăх Канашĕн депутачĕсем тата ытти яваплă çын – техника куравĕпе паллашрĕç. Хăватлă та перекетлĕ, темиçе çĕр лаша вăйĕллĕ тракторсем улăпсене аса илтерчĕç. Алăпа пуçтарнă техника та калаçтарчĕ. Ухман ялĕнчи П.Архипов ăсталанă погрузчикпе ĕçлеме питех те меллĕ терĕç.

Илемлĕхпе ăсталăх тĕнчи хăнасене 24 ял тăрăхне илсе çитерчĕ. Вĕсенче пурăнакансен ăсталăхĕпе паллашни çеç мар, кулленхи пурнăç çинчен калаçни паха пулчĕ. Ачча ял тăрăхĕ акă ялти кӳлĕне те кăтартрĕ. Унта – пулăсем. Арендăна илнĕ пĕве ял халăхне мĕнле усă панипе кăсăкланчĕ Михаил Игнатьев. Вăта Кипечсен сад ăсти çав тери пултаруллă. Мĕнле кăна улмаçырла илсе тухман вăл кăтартма! Черет тăрсах туянчĕç вĕсене каярах. Шелттемсем килĕсенчен кроликсемпе чăхчĕп те илсе килнĕ. Чăваш хĕрарăмĕ пир тĕртнине пăхма та вăрах чарăнса тăчĕç хăнасем. Пурнăç аталантăр, анчах аваллăх та ан манăçтăр терĕç.

Выльăхсăр пурăнайман ял çынни чун ыратăвне те пытармарĕ: сĕтĕн сутăн хакĕ чакать мар-и? Сăлтавне тишкерме тиврĕ.

Канаш район администрацийĕн ертӳçи Владислав Софронов та хăйĕн тишкерĕвĕнче çитменлĕхсене асăнмасăр хăвармарĕ. Уявра лайăххи çинчен калаçни аван, анчах ыранхи кун та шухăшлаттарма тивĕç. Ку вара паянхине çивĕч куçпа хакланинчен пуçланать. Канашсен пусă çаврăнăшне кĕртмен çĕрсене "ĕçлеттермелле". 5 пин гектара яхăнах вĕсем. Уйрăмах Ăнтавăш енче чылай. Владислав Васильевич асăннă тăрăх – ĕçе вырăнтан тапратма район администрацийĕ инвесторсем хĕрсех шырать. Вĕсем тупăнаççĕ. Ара, официаллă майпа çĕре харпăрлăха илессипе район республикăра лайăххисен шутĕнче. Кун пек чух, паллах, çĕре укçа хывас шухăшлисене явăçтарма çăмăлрах.

Иртнĕ çулхипе танлаштарсан Канашсен çитĕнĕвĕ пур. Пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене кăçалхи çур акире ытларах акнă. Вĕсен лаптăкне 14 процент ӳстернĕ /пĕтĕмпе 15 пин ытла гектар акнă/. Шăтнă калчасен пахалăхĕпе, пусă çаврăнăшне кĕртнĕ çĕрсен лаптăкĕпе коллективлă ял хуçалăх предприятийĕсенчен Киров ячĕллĕ ЯХПК, "АСК-Канаш", "Хучель" тулли мар яваплă пĕрлешӳсем палăрнă. Районти 60 ытла фермертан Э.Шамуков, В.Петров, И.Лукианов пултаруллисен йышне кĕнĕ. Уйсене тĕрĕсленĕ комисси çапларах пĕтĕмлетӳ тунă. Район администрацийĕн ертӳçи вара маттуррисене чылай асăнчĕ.

Районта промышленноç лайăх аталанать. Акă Хучел ял тăрăхĕнче тимĕр шăратакан завода тинтерех кăна тума пуçланăччĕ, иртнĕ уйăхра унта 120 çын ĕçлеме те тытăннă. Производство тата анлăланать, апла ял çынни валли хушма ĕç вырăнĕ пулать.

Паян халăха урăххи аптăратать – çумăр çумасть. Ялта пурăнаканшăн темле пулсан та çĕр хаклă, унран тухăç илес тет вăл. Çавăнпа район администрацийĕн ертӳçи те, республика Пуçлăхĕ те хресченсене вăйлă çумăра кĕтсе илме сунчĕç.

Яланах çĕрпе çывăх пулнă Михаил Игнатьев Канашсем хăйсен çитменлĕхĕсене пĕлсе ăна пĕтерессе шанчĕ. Районта усă курман çĕрсем юлмалла мар. Патшалăх политики ялсене аталанма тĕрлĕ майсем туса парать. Ӳркенмелле мар, вĕсене пурнăçа кĕртмелле. Канашсем ĕçчен, пултаруллă, спортпа туслă пулнăран пуянлăха ӳстерессе, вăрăм кун-çуллă пуласса ĕненчĕ республика ертӳçи.

Юрă-ташăпа çеç мар, спорт ăмăртăвĕпе те тулăх пулчĕ уяв. Лашасен чупăвне сывламасăр тенĕн пăхса киленчĕ халăх. Ара, хаклă парнесемшĕн – такапа тихашăн – юлан утçăсем сатур ăмăртрĕç.

■ **Ирина НИКИТИНА**

# Хастарлăх çитмест

***Республикăра социаллă çăмăллăхпа усă куракансен электрон карттине ятран палăртас ĕç малалла пырать. Ăна укçасăр тӳлев тытăмĕн «Пĕрлĕхлĕ транспорт картти» /«ПТК»/ ООО операторĕсем пурнăçлаççĕ.***

«ПТК» тулли мар яваплă общество пĕлтернĕ тăрăх – çу уйăхĕн 30-мĕшĕ тĕлне çăмăллăхпа усă куракансен аллинче – 60 пин карттă. Общество транспортĕнче 40-45 пинĕшĕпе çеç усă кураççĕ. Çынсен хастарлăх çитмест – хальлĕхе 29 пин карттăна çеç ятран палăртнă.

Ĕçе хăвăртлатас тĕллевпе «ПТК» ООО ертӳлĕхĕ вырăна тухса çăмăллăхпа усă куракансемпе тĕл пулать. Хальхи вăхăтра Улатăр, Сĕнтĕрвăрри, Красноармейски районĕсемпе Улатăр хулине çитнĕ.

ЧР Транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министерстви çынсене электрон карттăна ятран палăртас ĕçе хастарлăрах хутшăнма чĕнет.

**В.ГРИГОРЬЕВ.**

# «Сывă наци»

***Çакнашкал ятпа Шупашкарти студентсен скверĕнче субкультурăсен фестивалĕ иртнĕ. Унăн тĕллевĕ – çынсене сывă пурнăç йĕркине пăхăнма хăнăхтарас, çамрăксен субкультурине халăхра сарас тата яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа киревсĕр йăласенчен пăрасси.***

Уява хутшăнакансене ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Николаев, «Чăваш Ен» фонд президенчĕ Михаил Федотов, тĕп хулари Мускав район администрацийĕн пуçлăхĕ Андрей Петров тата ыттисем саламланă. Фестивальте çамрăксем хăйсен пултарулăхĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă. Куракансем рок тата реп юрри-сăввипе киленнĕ, илемлĕ ӳт-пӳллĕ пулас текенсем валли инструкторсем фитнес занятийĕсем ирттернĕ, спортпа туслисем баскетболла выляна, ташлама кăмăллакансем брейк-данс тата хип-хоп артисчĕсенчен уйрăлайман. Çавăн пекех фестивальте сиплĕ апат-çимĕç темипе ăсталăх сехечĕсем йĕркеленĕ, ал ĕç маçтăрĕсем илемлĕ капăрлăхсем тума вĕрентнĕ.

**О.МАСЛОВ.**

*Чăвашстат хыпарлать*

## Чăваш Республикинче 2013 çулта производствăра сусăрланни 1)




**Инкекĕн тĕп сăлтавĕ**

| Куçакан, сирпĕнекен, çаврăнакан япаласемпе детальсем витĕм кӳнипе | Ӳсĕлĕшĕнчен ӳксе сусăрланнипе | Япаласем, материалсем ӳкнипе, йăтăнса, ишĕлсе аннипе | Çул-йĕрпе транспорт инкекĕпе | Ытти |
|---|---|---|---|---|
| 30% | 17% | 13% | 7% | 33% |

1) Информацие экономикăн мĕн пур ĕçне /финанспа, патшалăх управленийĕпе тата çар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерессипе, социаллă страхованипе, вĕрентӳпе, кил хуçалăхĕпе çыхăннисемсĕр пуçне/ пурнăçлакан организацисенчен /микропредприятисемсĕр пуçне/ илнĕ кăтартусене тĕпе хурса хатĕрленĕ.

## Чăваш Республикинчи организацисенче тăрăшакансен ĕç условийĕсем 2013 çул вĕçĕнче 1)




1) Информацие çĕр айĕнчи пуянлăха кăларас, туса кăларакан производство, электроэнерги, газ, шыв туса кăларас тата валеçес, строительство, транспортпа çыхăну енĕпе ĕçлекен организацисенчен /вак предпринимательлĕх субъекчĕсемсĕр пуçне/ илнĕ кăтартусене тĕпе хурса хатĕрленĕ.

Производствăн сиенлĕ темиçе енлĕ витĕмне пĕр харăс лекекен çынсене пĕтĕм фактор тăрăх шута илнĕ.

# Химиксене саламланă

***Çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ ĕçлĕ визитпа Вăрнар районĕнче пулнă***

Михаил Игнатьевпа пĕрле Вăрнар район пуçлăхĕ Валерий Шумилов, район администрацийĕн пуçлăхĕ Леонид Николаев, «Август» фирма АХОн генеральнăй директорĕ Александр Усков, «Август» фирма АХОн «Вăрнарти хутăш препаратсен завочĕ» филиалĕн директорĕ Владимир Свешников, ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников çӳренĕ.

Республика Пуçлăхĕ Вăрнарти хутăш препаратсен завочĕн производство лапамĕн çĕнĕ ăслăлăх-производство центрĕпе, чĕр таварпа хатĕр продукцие анализ тумалли оборудованипе, полимер тара туса кăларнипе паллашнă, хатĕр продукци складне пăхса çавăрннă.

Вăрнарти хутăш препаратсен завочĕ Чăваш Республикин тулаш экономика ĕç-хĕлне хастар хутшăнать. Кунсăр пуçне «Август» фирма АХО ертӳлĕхĕ хăйсен ĕçченĕсен тата Вăрнар поселокĕнче пурăнакансен тĕлĕшпе социаллă пĕлтерĕшлĕ политика тытса пырать.

Хутăш препаратсен заводне тата Вăрнар поселокне аталантармалли малашлăха сӳтсе явса Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев предприяти ӳсĕм çулĕпе утнине палăртнă. Ял хуçалăх таварĕсем туса кăларакансем унăн продукцине хаваспах туяннă май çак ӳсĕме малашне те сыхласа хăвармалла. Вăрнар районне аталантарма та вăй-хăват çителĕклĕ, хими производствисĕр пуçне кунта апат-çимĕç туса кăларас енĕпе ăнăçлă ĕçлеççĕ. Поселокра фитнес-центр, пăр кермен тăваççĕ, малашне бассейн тума палăртаççĕ. Вăрнар поселокĕн инфратытăмне аталантармалли проектпа ĕçлеççĕ.

Республика Пуçлăхĕ Вăрнар поселокĕнче Совет урамĕнчи «Кремлевский» ача-пăча лапамне пăхса çаврăннă. Пĕчĕккисене ăна «Август» фирма АХО парнеленĕ.

«Химик» стадионта Чăваш Ен Пуçлăхĕ Химиксен кунне халалланă уява хутшăннă. Михаил Игнатьев Вăрнарти хутăш препаратсен завочĕн сотрудникĕсемпе ветеранĕсене професси уявĕпе саламланă, сывлăх, малалла аталанса пыма суннă. Республика Пуçлăхĕ социаллă политика тытса пынăшăн «Август» фирма ертӳлĕхне тав тунă.

Уявра фольклор ансамблĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартнă, спорт ăмăртăвĕсем иртнĕ.

■ **А.ЛЬВОВА**

# Мисчĕне паха шывпа тивĕçтернĕ

Чул хула чукун çулĕ 1996 çулхи çу уйăхĕн 14-мĕшĕнче Çĕмĕрле районĕнчи Мисчĕ поселокĕнче пурăнакансене инкек кăтартрĕ. Пуйăс кустăрмисем рельсран тухса кайнă пирки цистернăсем ӳпĕннĕ: дизтопливо, фенол çул хĕррине юхса тухса тавралăха пысăк сиен кӳнĕ. Вĕсем тăпрана сăрхăнса çĕр айĕнчи шывпа хутăшнине, пусăсене лекнине экспертиза ирттерсе палăртнă.

ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви сарăпа саплаштарас ыйтăва чукун çул предприятийĕн умне пĕрре çеç мар лартнă. «Раççей чукун çулĕсем» общество 2013 çулхи çу уйăхĕнче поселока çĕр айĕнчен уçлакан шывпа тивĕçтерме килĕшнĕ.

Малтан, темиçе çул каялла, чукун çул ертӳçисемпе урăх ыйтăва татса парасси – поселокри Ятсăр юхан шыв юппине гидроизоляцилесси – пирки калаçнă. Чукун çул ку ĕçе тăвассине хирĕçлемен. Анчах çынсем: «Юхан шыв юппине пӳлнипе пусăра шыв тасалмĕ. Пире çĕр айĕнчен уçлаканни кирлĕ», – теме тытăннă.

Предприяти строительство материал, оборудовани туянма, рабочисене ĕçлеттерме укçа уйăрнă. Урамсенче 8 çухрăма пăрăх тăстарнă, ăна сыпăлантарма 90 пусă тунă, шыв уçлама çĕнĕ башня вырнаçтарнă, электронасуса юсанă, 115 пӳрт умне пăрăх çитернĕ.

**Ю.МИХАЙЛОВ.**



Экологи кăларăмĕ

# Çут çанталăк

Вăрман

## «Кăçалхи тĕллеве пурнăçларăмăр»

*«Хыпар» ыйтăвĕсене ЧР çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕ Иван ИСАЕВ хуравлать.*



*● ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ А.Князев тата республикăн çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министрĕ И.Исаев /сулахайран иккĕмĕшпе виççĕмĕшĕ/ – çут çанталăк тусĕсемпе.*

**– Тавралăха ешĕллентермелли çурхи тапхăр иртрĕ. Унпа паллаштарсамăр?**

– Çунчăкран, хăрăк-хăрăкран, чирлĕ тата касмалли вăхăчĕ çитнĕ культурăсенчен тасатнă, строительствăна, вутта яма йывăç кăларнă лаптăксенче, ытти çĕрте вăхăтра хунав лартса чĕртесси, агротехникăна пăхăнса ĕçе пысăк пахалăхпа пурнăçласси – пирĕн вăрманçăсен умĕнче тăракан тĕп тĕллевсенчен пĕри, – терĕ Иван Васильевич. – Федерацин Атăлçи округĕн вăрман хуçалăхĕн департаменчĕн ертўçи Н.Кузьмин çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче иртнĕ селектор канашлăвĕнче республика хунав лартмалли плана чи малтан тултарнă субъектсен йышĕнче пулнине çирĕплетрĕ.

Кăçал тĕрлĕ культура 642 гектар лартмаллаччĕ. Вăрман фондне 648 тавăртăмăр: 2014 çулхи плана ирттерсе тултартăмăр. Вăл шутра патшалăх саккасĕпе çирĕплетнĕ килĕшĕве федераци хыснинчен уйăрнă укçапа пурнăçласа лартни – 560 гектар /86%/. Унсăр пуçне йывăç сайра шăтнă 48 гектара çамрăк хунавпа çăралатрăмăр. 15 гектар лаптăкра çитĕнтерме пăхман культурăсене пĕтерсе кирлисене ўсме май туса патăмăр. Курăк çулнă прачаксенче те çавăн чухлĕ пулчĕ. Вăрман фондне кĕртнĕ йывăçсен 92% – çынсем лартни.

2014 çулта 837 гектар хунав лартмашкăн усăлăх хатĕрлеме, тĕрлĕ майпа усă курса йывăç тымарне тăпрана варăнтарма, питомниксенче килес çулсем валли хунав çителĕклĕ шăтарма, ăна çум курăкран тасатма, йывăç сайра шăтнă çĕре çăралатма, вăрлăх кирлĕ чухлĕ пуçтарма, ытти ĕçе пурнăçлама федераци хыснинчен 22,2 млн тенкĕ уйăрĕç.

**– 2010 çулта вут-çулăм иртнĕ лаптăксене çунчăкран тасатассине еплерех йĕркеленĕ?**

– Вĕсенче ĕç аванах – 2011-2013 çулсенчи пекех – пырать. Ку ыйтăва пĕр кун та куçран вĕçертместпĕр. Çуркунне çунчăка пухса турттарнă 492 гектар лаптăкра хунав лартрăмăр. Кĕркуннеччен ытти лаптăкри хăрăмлă кăмăр-каптака аякка сирсе ĕçе малалла тăсăпăр. Вуткăвар алхаснă чăтлăх-вĕтлĕх вырăнне çунчăкран пĕтĕмпе 5305 гектар /80%/ тасаттартăмăр. 1820 гектар /30%/ хунав лартрăмăр ĕнтĕ. Танлаштарма: федерацин Атăлçи округĕнчи пушар тăкак кўнĕ вăрман лаптăкĕн – 34%, Мари Элпа Мордвари – 35%, Чул хула облаçĕнчи 22% çунчăка пуçтарса купаланă.

2013 çулта 982 гектар лаптăкри хăрăмлă кăмăр-каптака пĕр çĕре пухма федераци бюджетĕнчен – 13 млн, республика хыснинчен 4 млн тенкĕ куçарчĕç. Кăçал пурĕ – 689, вăл шутра федерацирен уйăрнă укçапа 399 гектар çинчен турттарса тухма палăртрăмăр. Шел те, Раççей Вăрман хуçалăхĕн агентстви кĕмĕл çителĕклĕ куçарман пирки ĕç тăсăлать. Унăн ертўлĕхĕнчен нухрат куçарма ыйтатпăр.

**– Çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче çĕршывĕпех, çав шутра Чăваш Енре те, йывăç лартнă. Ырă ĕç мĕнле иртрĕ?**

– Министерство тата «ЭКА» общество организацийĕ çав кун Атăл леш енче йĕркеленĕ экологи акцине çынсем йышлăн хутшăнчĕç. Çут çанталăк тусĕсене Атăл йăлăмĕнче хунав лартма иртнĕ çул пуçласа явăçтартăмăр. Хаваспах пычĕç. Кăçал та пулăшрĕç. Акцие çуллен çĕнĕ çынсем хушăнаççĕ. Ку ĕç тўлевсĕр. Çак çуркунне юхан шыв урлă 200 çын /Шупашкарти вĕренў заведенийĕсен студенчĕсем, преподавательсем, «Газпром межрегионгаз Чебоксары» ĕçченĕсем, Раççей вăрманне пуянлатассишĕн тăрăшакансем/ каçрĕ. Республикăн Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Анатолий Князевпа Киям Мифтахутдинов çамрăксене лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕç. Шупашкар вăрманлăхĕ вĕсене ĕç хатĕрĕпе, хунавпа тивĕçтерчĕ. Пĕрремĕш хут йывăç лартакансене вăрманçăсем ĕç меслетне хăнăхтарчĕç. Пурĕ 30 пин тĕп лартрăмăр.

Çав кун акцие вăрманлăхсем те хутшăнчĕç. 561 çын 37,7 гектар çине 250 пин тĕп йывăç лартрĕ. Вăрманлăх специалисчĕсем, волонтерсем ял-хула çыннисене çут çанталăка хўтĕлеме чĕнсе каларĕç, 4 пин буклет салатрĕç.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ калаçнă**

Тасату

## Кўршĕсен кўренме сăлтав çук

**Иртнĕ эрнере журналистсене ЧР Строительство министерствин Çĕнĕ Шупашкарти «Биологи тасатăвĕн сооруженийĕсем» патшалăх унитари предприятийĕн ĕç-хĕлĕпе паллаштарчĕç**

Кунта темиçе хутчен те çитсе курнăран кашнинчех объект Шупашкарпа спутник хулашăн пысăк пĕлтерĕшлине палăртса таврăнатăп. Биологи тасатăвĕн сооруженийĕсен I черетне тĕп хулапа Çĕнĕ Шупашкарта пухăнакан шĕвĕ каяша тасатма 1967 çулта хута янă. Пĕлтĕр объект вĕсенчен, «Химпром», «Нерудстром» обществăсенчен çĕр айĕнчи пăрăхпа кашни талăкра вăтамран 63,6 пин кубла метр йышăннă. Хуласем сарăлнă, каяш нумайланнă пирки 1976-1986 çулсенче II черете тунă. Иртнĕ çул Шупашкарти «Водоканал», «ТЭЦ-3», «СУОР», «ЖБК-2» обществăсен, Çĕнĕ Шупашкарти канализаци станцийĕн пăрăхĕсенчен сооруженисене кашни талăкра вăтамран 103 пин кубла метр çитнĕ. Вĕсен проектра пăхнă хăвачĕ – кашни талăкра 222 пин кубла метр. Хальхи вăхăтра 2009 çулхинчен 40% сахалрах пуçтарăнать. Сăлтавне производствăра, пурăнмалли вырăнта ĕçмелли шыва перекетленипе ăнлантарчĕç.



Каяша виçĕ тапхăрпа тасатаççĕ. Пĕрремĕшĕнче ăна ала евĕр хатĕрсем витĕр сăрхăнтарса хыттине /çав шутра – апат, пахча çимĕç, улмаçырла юлашки, полиэтилен савăчĕ, хăйăр, ытти ăпăр-тапăр/ тытса юлаççĕ, йăлари хытă каяш полигонне леçеççĕ. Иккĕмĕшĕнче каяшри органикăна, органика шутланман /кўкĕрт водородĕ, аммиак/, куçа курăнман хутăшсене усăллă бактерисем сиенсĕрлетеççĕ. Цехран ятарлă агрегатпа картишĕнчи çаврака бассейна аса илтерекен каяш пуххисене, вĕсем апатланнă çĕре, вĕçĕмсĕр сывлăш хăвалаççĕ. Кунта бактерисен 5-8 тĕсĕ ĕрчет. Вĕсем – биологи тасатăвĕнче тĕп вырăнта. Ансат тата кăткăс микроорганизмсем /тĕрлĕ инфузори, коловратка, куçа курăнман ытти чĕрлĕх/ те аталанаççĕ. Ансаттисем бактерисене сăхаççĕ, ытлашши ĕрчеме памаççĕ.

Виççĕмĕшĕнче каяша этем сывлăхĕшĕн хăрушă шутланман натри гипохлоричĕпе дезинфекцилеççĕ те Атăла, спутник хулан кимĕ станцийĕ тĕлĕнче, çыранран 60 метрта юхтарса кăлараççĕ. Тивĕçлĕ органсем Куйбышев шыв управне лекекен хутăша тĕрĕслесех тăраççĕ. Сергей Анисимов директор каланă тăрăх – патшалăх çирĕплетнĕ нормăна тивĕçтерет, Чĕмпĕр облаçĕпе Тутарстана пăшăрхантармасть.

Çăра каяша типĕтсе гранула çапакан корпус тума хыснаран 749 млн тенкĕ уйăрнă. Ăна – 2012 çулта, çăра каяш тултармăшне 2010 çулта хута янă. Сооруженисен III черетне тума пуçланă. Тимĕрбетон хунăпа пĕрех. Кăçал строительсем ĕç пурнăçлама 300 млн тенкĕ уйăрасса шанаççĕ. 2010 çултан тытăнса вĕсем 887 млн тенкĕпе усă курнă.

«Атăл айлăмĕнчи çынсен сывлăхĕшĕн тăрăшнине ырлатăп çеç, – терĕм директора. – Тури юхлăхран Шупашкар шыв управне мĕнле пахалăхлă шыв килсе капланнине калаймастăр-и?» «Пĕлместĕп, – хуравларĕ вăл. – Тен, тĕп хулари «Водоканал» хуравлĕ». Ахăртнех, ту енре мĕнле хутăш кăларса янине пĕлни никама та пăсмĕччĕ.

Каяша ала евĕрлĕ сĕркĕчсем витĕр кăларса ăпăр-тапăра тытса юлнă хыççăн шывран уйăрма центрифугăсем вырнаçтарнă цеха çитереççĕ. Унта каяшри нўрĕк шайĕ 73-75% юлать. Гранула корпусне çĕкличчен пĕтĕм каяша пухмачсене /шламонакопительсене/ кăларнă. Пĕлтĕртен унта тултармаççĕ, центрифуга цехĕнчен типĕтмелли, вĕрипе утилизацилемелли корпуса яраççĕ. Ăна Итали специалисчĕсем ĕçе кĕртме пулăшнă, агрегата ĕçлеттерме вĕрентсе хăварнă.

280 градус вĕрире типĕтсе çăра хутăшран пўрне хулăнăш гранулăсем тăваççĕ. Вĕсене кăмакара çунтарса шĕвекрен уйăрнă çăра каяша типĕтеççĕ. Гранула хăйĕн хĕрўлĕхĕпе паха çĕр кăмрăкĕпе танлашать. Кашни талăкра 1300 тонна хутăшран 12 тонна кĕл тухать. Унпа çул хывнă çĕрте усă кураççĕ, кивĕ каяша хуплаççĕ.

Иваново микрорайонĕнче пурăнакансем шăрăхра ПУП енчен йывăр шăршă килни пирки çуллен шăв-шав çĕкленĕ. «Кăçалхи çу уйăхĕнче кăнтăрла эрне ытла 30 градус ăшă тăчĕ, – терĕ С.Анисимов. – Апла пулин те тислĕк шăрши сăмсана каллех кў! çапрĕ тесе телефонпа шăнкăравласа пĕлтермерĕç. ПУП усалпа кĕрешни усса каять. Микрорайон сооруженисенчен 1,1 çухрăмра çеç. Малтан 25-30 градус ăшă тăнă, çил хĕвел тухăç, кăнтăрхĕвел тухăç енчен вĕрнĕ чух хулара ырă мар шăршă сарăлатчĕ. 2011 çулта ăна пĕтерме автомат туянтăмăр, кивĕ каяш лаптăкне вырнаçтартăмăр. Çил микрорайон еннелле вĕрме тытăнсанах вăл кашни ултă метрта реагент пĕрĕхтерсе тислĕк шăршине хуплать. Автомат пăрăхĕ 2738 метра тăсăлать. Тутлă шăршă саракан шĕвеке сирпĕтме 456 хатĕр лартрăмăр. Реагентшăн 113 пин тенкĕ тăкакларăмăр. Усал шăршă сараканни – иртнĕ çулсенче тултарни. Ăна тăмпа икĕ метра яхăн, çиеле хура тăпра хуплама тĕллев лартрăмăр».

III черете туса пĕтерсен тасату пахалăхĕ татах лайăхланĕ. Унпа усă курма пуçласан 1967 çулта хута янине ĕçрен кăларĕç. Директор çитес çулсенче Кўкеçре пухăнакан шĕвĕ каяша та кунта çитермелли проект хатĕрлессине пĕлтерчĕ.

■ **Михаил СЕРГЕЕВ**

Шухăш

## Хуçа тата хуçалăх кирлĕ

*РФ Патшалăх Думи 2006 çулта Раççей Федерацийĕн Вăрман кодексне /ВК/ йышăнчĕ. Унпа килĕшўллĕн вăрман хуçалăхĕнче пысăк улшăну пулса иртрĕ.*

Правительство комиссийĕ документ проектне виçĕ çул хатĕрлерĕ. Тĕпчевçĕсем, вăрман отраслĕнче вăй хуракансем, ветерансем, общество организацийĕсем унта кĕртме сĕнў нумай тăратрĕç. РФ Вăрманçисен обществин президенчĕ А.И.Писаренко, ăсчахсен ушкăнĕ ВКна улшăну кĕртес тĕллевпе виçĕ монографи пичетлерĕç. Н.А.Моисеев, В.В.Страхов, Н.И.Шутов, Г.И.Редько, А.И.Зверев, Д.М.Гиряев профессорсем вăрман хуçалăхне рынок экономикин çулĕ çине тăратассишĕн усăллă сĕнў чылай пачĕç. Шел те, вĕсен шухăшĕ отраслĕн тĕп саккунĕнче вырăн тупмарĕ. Канăçсăр чĕреллĕ çынсене вăл халĕччен тавлаштарать. Ăна сўтсе явма хутшăннисене вăрмана упрасси, хушасси тарăн шухăша ярать, отрасльте хăш-пĕр енĕпе ĕç начар пыни кулянтарать.

«Вăрман хуçалăхĕ» сăмах майлашăвне кодекса кĕртмерĕç. Çĕр-шывра 2006 çултанпа вăрман хуçалăхĕ çук-ши? Пур! Йывăç хуçалăхсăр сиен кўрекенрен упранаймасть, хушăнаймасть. «Вăрман хуçалăхĕ – пурлăх тăвакан производство, – вулатăп энциклопедире. – Çак отрасль тĕллевĕ – йывăç лартса çитĕнтересси, вăрмана шута илесси, тĕпчесси, пушартан, чир-чĕртен, сиенлĕ хурт-кăпшанкăран упрасси, чăтлăх-вĕтлĕхпе усă курас ĕçе йĕркелесси».

Вăрман хуçалăхĕ умĕнчи çак тĕллев пиншер çул иртсен те улшăнмĕ. Паян Раççейре – 800 млн гектар вăрман. Ăна пăхмасан – сайралать, катăлать. Анчах темшĕн «вăрман хуçалăхĕсене тытса тăрасси», «вĕсен ĕçне йĕркелесси», вĕсемпе тачă çыхăннă ытти ăнлав документа лекмерĕ. Унта çав ыйтусене «мероприяти системин» шайне антарнă.

«Текстра «вăрман хуçалăхĕ» ăнлав çуккине вăрман сфери экономикăн кирек хăш отраслĕ пекех кăткăс та нумай енлĕ пулнипе ăнлантармалла, – палăртнă ВК авторĕсем. – Вăрман сферинчи социаллă пурнăçпа экономика хутшăнăвĕсем ĕçлевпе те, укçа уйăрассипе те, халăхăн социаллă ыйтăвĕсене татса парассипе те, ыттипе те çыхăннă. Вăрман саккунĕсен никĕсне кодексăн 3-мĕш статйинче социаллă пурнăç тата экономика хутшăнăвĕсемпе çыхăнтарман».

Отраслĕн тĕп саккунĕнче «вăрман хуçалăхĕ» сăмахсем çуккине çапла ăнлантарчĕç: «Рынок экономикин условийĕсенче вăрмана хўтĕлессипе, упрассипе, хунав лартса çитĕнтерессипе çыхăннă мероприятисене вăрман хуçалăхĕн ĕç-хĕлĕн йышне /халĕччен унта вăрманпа çыхăннă кирек хăш ĕçе те кĕртнĕ/, предпринимательлĕхĕн, муниципалитетпа патшалăха тытса тăрас ĕç сферисене кĕртме юраман. Хальхи вăрман саккунĕсем пурте усă куракан вăрман хуçалăхĕн ĕç-хĕлне пайлаççĕ. Вăрман правин тата вăрман хуçалăхĕн сферисене вăрман йĕркелессипе, ăна упрассипе, хўтĕлессипе, хунав лартса çитĕнтерессипе, ытти ыйтупа çыхăннă ĕçсене тĕрлĕ ушкăна кĕртеççĕ».

Документа ăнлантарнинчен: «Вăрман хутшăнăвĕсем вăрман хуçалăхĕнче йĕркеленни пур енĕпе те – вăл шутра вăрмана сыхлассипе, хўтĕлессипе, хунав лартса çитĕнтерессипе – иккĕлентермест. Кодекса «вăрман хуçалăхĕ» ăнлава кĕртменни пĕтĕмĕшле илсен ВК ăна хирĕççине пĕлтермест».

Икĕ сăмах документа кĕме тивĕçлĕ пулаймарĕ пулин те Раççей вăрманĕ сакăр çул унчченхи пекех кашлать, унăн хуçалăхĕ пур. Çапах та мана отрасле иккĕлле йышăнаççĕ пек туйăнчĕ.

«Вăрмана ĕçе кĕртесси» статья хисеплĕ вырăн йышăнать. Çак ăнлава «вăрманпа усă курас тĕллевпе тивĕçлĕ ĕç пурнăçласси, йывăçран тавар туса кăларас тĕллевпе производство инфратытăмне йĕркелесси, ăна ĕçлеттересси, вăрмана сыхласси, упрасси, хунав лартса çитĕнтересси, чĕр чун тĕнчине, шыв-шура хўтĕлесси» йĕркесем кĕреççĕ.

Авторсем ВК тĕллевне кодекса ăнлантарнинче усăмлă палăртнă: «Вăрман саккунĕсен идеологине право витĕмĕ экономикăн вăрман секторĕнчи рынок хутшăнăвĕсене йĕркелемешкĕн ан кансĕрлетĕр, вĕсене аталантарма, вăрман промышленноçне укçа-тенкĕ ытларах хывма май туса патăр тесе никĕсленĕ. Шăпах çак тĕллевпе вăрман хуçалăхне тĕпрен çĕнетме палăртнă. Документ вăрмансене ĕçе кĕртесси пĕрремĕш тĕллев пулса тăнине пĕлтерет».

Отраслĕн пĕрремĕш саккунĕ промышленноçа аталантарма, уйрăммăн илсен вăрман касма, вăл çитĕнекен лаптăка приватизацилеме анлă çул туса парать. Ку ыйтăва хаçатсенче темиçе çул сўтсе яваççĕ. Хăшĕпĕри ешĕллĕхе йывăçпа ĕçлекен предприятисен харпăрлăхне пама – урăхла каласан качакана купăста пахчине кĕртме – сĕнет.

«Вăрмансене ĕçе кĕртесси» ăнлав ВКран «вăрман хуçалăхĕ» сăмахсене тĕртсе кăларчĕ. Апла пулин те вăрман хуçалăхсăр юхăннине, йăшнине пурнăç çирĕплетет. Çакна 2010 çулхи пушарсем лайăх кăтартрĕç. Кодекса вăрман хуçалăхне вăйлатма пулăшакан статьясем кĕртмелле. Ку ĕç пырать ĕнтĕ. Унта халĕччен 20 ытла улшăну, хушу кĕртнĕ.

■ **Петр ТИХОНОВ, вăрман ветеранĕ**

Тĕрĕслев

### Пăсма тивет

Чăтлăх-вĕтлĕхе тара илнисем РФ вăрман фончĕн лаптăкĕнче саккуна пăсса çурт-йĕр тунă пирки ЧР Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви пĕлтĕр суда 8 тавăç тăратнă, йышăну кăларса пăстарма ыйтнă. Тўресем 6-шне тивĕçтернĕ.

Сăмахран, Шупашкарти Мускав районĕн сучĕ арендатор Сăнав вăрманлăхĕн Ильинка уйрăмĕнче /Муркаш районĕ, Атăл хĕрри/ тара илнĕ лаптăкра лартнă икĕ хутлă йывăç çуртпа картине пăстарма, министерство унпа 2009 çулта çирĕплетнĕ килĕшĕве татма йышăннă. Арендатор тўре йышăнăвĕпе килĕшмен, хăйĕн çĕнĕ çирĕплетĕвне суд йышăну кăларнă чух шута илме пултарайман, кăçал вăл питĕ пĕлтерĕшлĕ тесе ĕçе тепĕр хут пăхма ыйтнă.

Нумаях пулмасть тепĕр лару иртнĕ. Тўре иртнĕ çулхи йышăнăва вăйра хăварнă. Çакăн хыççăнах арендатор патне пристав çитнĕ, йышăнăва пурнăçлама ыйтнă. Лешĕ унталла-кунталла пăркаланнă. Тўре-шара темиçе асăрхаттарнă хыççăн тин картине сўтнĕ. Пăсмалли черетре – пўрт.

### Хўтĕлев лаптăкĕнче

«Етĕрне сĕчĕ» усă общество Сăр тата Хура юхан шыв çыранĕнче, шыва хўтĕлемелли лаптăкра, çурт-йĕр лартса шыв-шур, çĕр саккунĕсене пăснă текен информацие районсен хушшинчи çут çанталăка сыхлакан Шупашкар прокуратури тĕрĕсленĕ. Предприятирен пурте усă курмалли шыв объекчĕ шутланакан Хура юхан шыв хĕрринчи 20 метр сарлакăш лаптăкпа çынсене ирĕккĕн иртсе çўремешкĕн май туса пама ыйтса Етĕрне районĕн судне тавăç тăратнă. Çакăнпа пĕрлех «Етĕрне сĕчĕ» Сăрăн тата Хура юхан шывăн шыва хўтĕлемелли лаптăкĕнче хăпартнă хуçалăх объекчĕсенче шыв-шура, тавралăха хўтĕлемелли саккунсемпе килĕшўллĕн юхлăха вараласран, юшкăнлатасран, шыв шайĕ чакасран упранма пулăшакан сооруженисем тума ыйтнă. Прокурор обществăн кану базинче çумăр шывне территорирен юхтарса тăма пăрăх хывас, тасату хатĕрĕ тăвас ыйтăва çирĕп лартать.

### Ытлашши вараланă

Муниципалитетăн «Йĕпреç районĕнчи шыв каналĕ» унитари предприятийĕ Кушлавăш юхан шывне шĕвĕ каяш патшалăх çирĕплетнĕ нормăра пăхнинчен нумайрах юхтарса кăларнă. Çакăншăн МУПа административлă майпа айăплама /штрафлама/ йышăннă, предприяти директорĕнчен юхан шыва вараламашкăн чарăнма ыйтнă.

■ **Семен ВАСИЛЬЕВ**

Ахрăм

### Тавралăха симĕслентернĕ

*Ака уйăхĕнче «Хыпар» хаçат Елчĕк районĕнчи В.Антонова, Р.Кузьмина, В.Козлов, Л.Иванова, Арбузовсем алă пусса янă çырăва илчĕ.*

«Кĕçĕн Таяпапа Патреккеле асфальт çул çыхăнтарать, – çырнă вĕсем. – Сылтăм айккинче – ишĕлсе сарăлакан çырма. Вăл ял патнех çитрĕ. Унăн çулне пўлмеллех. Кăçал шырлан ишĕлекен çĕре йывăç лартса хăварасчĕ».

Çыру авторĕсем çĕкленĕ ыйтăва вырăнти влаç татса патăр тесе ăна çийĕнчех Кĕçĕн Таяпа ял тăрăхĕн администрацине ярса патăм. Унтан хурав килмен-ха. Апла пулин те администраци иртнĕ çуркунне ял тăрăхне ешĕллентерес ĕçе йĕркеленине пĕлсе савăнтăм. Çу уйăхĕн 16-мĕшĕнче Кĕçĕн Таяпа вăрманĕнчен инçе мар, иккĕмĕш пĕве хĕррине, йăмра, хурăн, ăвăс, тирек пурĕ 400 тĕп лартнă. Çырана тымарлантарма администраци, клуб ĕçченĕсем тата Шупашкартан асламăшĕ патне хăнана килнĕ Санькка тăрăшнă. Çырма-çатра çулне пўлес тĕллевпе йĕркеленĕ акцие Головин, Морозов, Савинов, Михайлов çемйисем хастар хутшăннă.

Çак ял тăрăхĕнчи Таяпа Энтри шкулĕнче вĕренекенсемпе вĕрентекенсем пĕвене хурăнпа, пилешпе, йăмрапа, ытти культурăпа илемлетнĕ.

**Василий ПЕТРОВ.**

Шутлав

## Шăммине те хăварман

*ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх служби кăçалхи кăрлач-нарăс уйăхĕсенче сунар ресурсне кĕртнĕ чĕрĕлĕхе шутларĕ, çур уйăх каялла йышне пĕлтерчĕ.*

Служба сайтне кĕрсе унăн пĕтĕмлетĕвĕпе кирек кам та паллашма пултарать. Сунар объекчĕ шутланакан вĕçен кайăк хисепне иртнĕ çулсенчипе танлаштарар-ха. Мĕнле улшăну пур?

Сунарçăсем карăк ашне килĕштереççĕ. Республикăра йышĕ пĕчĕкленнĕрен тытма чарнă пулин те служба инспекторĕ асăрхаман чух «серепене» çаклатаççĕ. Çакна çирĕплетекен тĕслĕх пайтах. 2009 çулта ăна – 1484, 2010 ç. – 990, 2011 ç. – 775, пĕлтĕр – 785, кăçал 836 шута илнĕ. Йыш 2014 çулччен хухнă.

Акарçăсене тытма чарман, инспекторсем браконьерсемпе кĕрешмен пулсан вăл кăçал та чакасси куç кĕретчĕ. Вĕсене ытларах явап тыттарсан, пайтаçăсем тара илнĕ сунар лаптăкĕсенче ытларах ĕрчеме май тусан хунас шанăç пур. Хальлĕхе ахаль карăк çак районсенче çеç ĕрчеет: Улатăр – 95, Патăрьел – 18, Йĕпреç – 216, Комсомольски – 8, Шăмăршă – 480, Çĕмĕрле – 19. Ытти районти юлашки карăка тахçанах çисе янă. Шăммине те хăварман.

Сунарçăсен тепĕр юратнă кайăкĕ – сăрă хир чăххи. Вăл Элĕксен – 79, Патăрьелсен – 952, Йĕпреçсен – 367, Комсомольскисен – 778, Красноармейскисен – 64, Пăрачкавсен – 1004, Çĕмĕрлесен – 395. Ытлашши тытмасан çĕр-çĕр ял çывăхĕнчи ĕшне-ката таврашĕнче, çын е выльăх çўремен, курăк ашкăракан улăх-çаранра ĕрчеет. Вăл Улатăр, Вăрнар, Канаш, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Вăрмар, Çĕрпў, Шупашкар, Шăмăршă, Етĕрне, Елчĕк, Тăвай районĕсенче пĕрре те çук. Цифрăсем ăна «танатана» нормăра пăхнинчен нумайрах çаклатнине çирĕплетеççĕ. Республикăра 2009 çулта – 29746, 2010 ç. – 40782, 2011 ç. – 27137, 2013 ç. – 4977, кăçал 3639 шутланнă. Хисеп нумай каталнă.

Ăсан йышĕ çавнашкал улшăннă: 2002 ç.– 3553, 2004 ç. – 6309, 2005 ç. – 7660, 2008 ç. – 13902, 2011 ç. – 10840, 2014 ç. – 8425. Вăл чĕп çитĕнтерекен хурăнлăха çапкаланчăк йытă, кĕтў, сунарçăсем кĕрсе хăратмасан, браконьерсем вĕлермесен вăл та ытларах хунаса хула-ял халăхне савăнтарĕ. Улатăр – 1156, Элĕк – 172, Патăрьел – 255, Вăрнар – 212, Йĕпреç – 1005, Куславкка – 241, Комсомольски – 120, Красноармейски – 134, Хĕрлĕ Чутай – 279, Сĕнтĕрвăрри – 258, Пăрачкав – 3118, Шăмăршă – 148, Çĕмĕрле – 1161, Етĕрне – 166, Канаш, Муркаш, Вăрмар, Çĕрпў, Елчĕк, Тăвай тата Шупашкар – 0.

Сунар ресурсĕнчи тепĕр вĕçен кайăк – пăчăр. Хам курман. Телевизорпа кăтартаççĕ: кăвакарчăн пысăкăш пур. Чăваш Енре 2002 çулта – 3205, 2003-2007 çç. – 4989-6439, 2008 ç. – 22391, 2010 ç. – 10171, 2012 ç. – 7891, кăçал 6889 шута илнĕ. Ултă çул каяллахинчен нумай хухнă. Вăл çак районсенче ĕрчет: Улатăр – 1518, Патăрьел – 384, Вăрнар – 95, Йĕпреç – 1716, Комсомольски – 182, Пăрачкав – 639, Шăмăршă – 1669, Çĕмĕрле – 686, ытти районта пĕтернĕ.

Кăвакал хăй /кряква/, симĕс йĕрлĕ шăркалчă /чирок-свистунок/ тата шурă йĕрлĕ шăркалчă /чирок-трескунок/ сунар ресурсне кĕреççĕ. Çуркунне аçине çеç, кĕркунне амине те тытма ирĕк пăраççĕ. Иртнĕ çуркунне пĕрремĕшне служба инспекторĕсем кашни районтах тата пурĕ – 16956, «Чăваш Республикинчи кайăксем» /2013 ç./ кĕнеке авторĕсем пĕлтĕр Чăваш Енре чĕп кăлараканнине 4-8 пин шута илнĕ. Ытларахăшĕ республика урлă вĕçсе иртет. Улатăр /4681/, Шупашкар /3862/, Куславкка /1397/, Пăрачкав /1087/, Çĕмĕрле /772/ районĕсенче вăл нумайрах.

Симĕс йĕрлĕ шăркалчăпа шурă йĕрлĕ шăркалчă хисепне пĕрле кăтартнă: 10236. Асăннă кĕнеке авторĕсен шучĕпе, Чăваш Енре пĕрремĕшĕ – 100-200, иккĕмĕшĕ 3-5 пин мăшăр чĕп кăларать.

Пĕтĕмлетўре сунар объекчĕ шутланакан ытти кайăк йышне кăтартман.

■ **Михаил ЮРЬЕВ**

**Кăларăма Юрий МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.**

*Ирĕклĕ мелпе кĕрешесси*

# Пирĕн ентеш – çĕр-шыв чемпионки



*cap.ru сăн ӳкерчĕкĕсем*



***Чăваш Енре ирĕклĕ мелпе кĕрешекен йышлă. Çавăнпах пулĕ пирĕн республикăра олимпçăсене хатĕрлекен спорт центрĕ тума палăртнă. Çак кунсенче Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕн керменĕнче хĕрарăмсен хушшинче иртнĕ çĕр-шыв чемпионачĕ ку шухăша çирĕплетет.***

***● ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Канаш пикине Алина Моревăна çĕнтерӳпе саламлать.***

Чăваш Енре республика чысне тĕнчери чи пысăк ăмăртусенче хӳтĕленĕ хĕр сахал мар. Акă Çĕнĕ Шупашкарти Ольгăпа Наталья Смирновсем тахçанах ят-сум çĕнсе илнĕ. Пĕр тăвансем республикăри, çĕр-шыври тĕрлĕ ăмăртура палăрнă, Европа тата тĕнче чемпионачĕсен пьедесталĕ çине темиçе хут хăпарнă. Ольга 2008 çулта Олимп вăййисенче бронза медаль çĕнсе илнĕ, халĕ вăл – 1-мĕш спорт шкулĕн тренерĕ. Наталья – Раççейĕн пĕрлештернĕ командин аслă тренерĕ. Çавăн пекех Европăн пилĕк хут чемпионки Наталья Гольц, Пĕтĕм тĕнче Универсиадинче виççĕмĕш вырăн йышăннă Екатерина Краснова, юниорсен хушшинче иртнĕ тĕнче тата Европа ăмăртăвĕсенче çĕнтернĕ Надежда Федорова, ирĕклĕ мелпе кĕрешекен тата ытти пике спорт аталанăвне пысăк тӳпе хывнă.

Чăваш Енре пĕрремĕш хут иртнĕ ăмăртăва çĕр-шыври 22 регионтан килнĕ 110 спортсмен хутшăнчĕ. Вĕсене республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев саламларĕ. "Чăваш Енре спорта аталантарас тĕллевпе чылай ĕç пурнăçланать, çынсен сывлăхне çирĕплетме те услови çителĕклех. Çĕнĕ объектсем çĕкленеççĕ, киввисене юсаса хăтлăлатаççĕ. Паянхи ăмăрту та республикăри чи пысăк керменте иртет. Ирĕклĕ кĕрешӳ – вăйлисем валли, унта паттăррисем кăна çĕнтереççĕ. Хĕрарăмсем те кавир çинче хастаррăн тупăшаççĕ", – терĕ вăл. Михаил Васильевич спортсменсене хатĕрлес ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунă çамрăк тренера Светлана Константиновăна "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ" ята тивĕçнине ĕнентерекен удостоверени пачĕ. Кĕрешӳçĕсене çавăн пекех Раççей спорт кĕрешĕвĕн федерацийĕн президенчĕ, Олимп чемпионĕ Михаил Мамиашвили, РФ пĕрлештернĕ командин тĕп тренерĕ Юрий Шахмурадов, ЧР ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен федерацийĕн ертӳçи Алексей Лапшин ăнăçу сунчĕç.

Спортсменсем сакăр виçере тупăшрĕç, вĕсенче чи пултаруллă та маттур кĕрешӳçĕсем мала тухрĕç. Палăртма кăмăллă: 48 килограмлисен ушкăнĕнче пирĕн ентеш, халĕ Брянск облаçĕнче пурăнакан Алина Морева /Анисимова/ çĕнтерчĕ. 25-ри пике Канаш районĕнчи Шăхасанта çуралса ӳснĕ, районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнче тата Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 5-мĕш спорт шкулĕнче ăсталăха туптанă, Олимп резервĕсен училищинче пĕлӳ илнĕ. Вăл – Раççей тата Европа ăмăртăвĕсен çĕнтерӳçи, çĕр-шывăн икĕ хут чемпионки. Пĕлтĕр Çĕнĕ Шупашкарта иртнĕ çĕр-шыв кубокĕнче те Алина чемпион ятне тивĕçнĕччĕ. "Спортсменшăн кашни çĕнтерӳ питĕ пĕлтерĕшлĕ. Эпĕ те паянхи ăмăртупа кăмăллă. Чемпионат тăван енре иртни хавхалантарать, вăй-хăват хушать", – терĕ тĕнче чемпионатне хутшăнма ĕмĕтленекен Алина. Финалта пирĕн ентеш çĕр-шыври чи вăйлă спортсменкăпа, Кемĕр облаçĕнчи Валерия Чепсараковăпа тупăшрĕ.

РФ пĕрлештернĕ командин тĕп тренерĕ Юрий Шахмурадов каланă тăрăх – ăмăрту çĕнтерӳçисем тĕнче чемпионатне хутшăнĕç, çывăх кунсенче спортсменсем сбора тухса кайĕç, унта тĕнче турнирне хатĕрленĕç.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

## Пултаруллисене чысланă

***Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун умĕн Патăрьел районĕнче «Объективра – çемье» çамрăк çемьесен хушшинче йĕркеленĕ сăн ӳкерчĕксен конкурсне пĕтĕмлетнĕ. Унта Тури Туçа, Нăрваш Шăхаль, Çĕнĕ Ахпӳрт, Шăнкăртам, Тăрăн, Патăрьел, Тутар Сăкăт ял тăрăхĕсенчи çемьесем хастар хутшăннă.***

«Манăн çемье – манăн шанчăк» номинацире Нăрваш Шăхальти Груздевсем çĕнтернĕ. «Объективра – анне» номинацире Патăрьелти Скворцовсен сăн ӳкерчĕкĕ ыттисенчен ăнăçлăрах тесе палăртнă. «Ашшĕн дебючĕ» номинацире Патăрьелти Арлановсем çĕнтернĕ. Çĕнтерӳçĕсене пурне те асăнмалăх парнесемпе хавхалантарнă.

**Р.ВОЛЬНАЯ.**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.






### ПРОДАЮ

**4.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка - бесплатно. Т. 89875766562.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Доставка. Т. 444433.

**33.Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг, водостоки.** Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок,** щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

**178.Гравмассу, песок, цемент.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**249.БРУСЧАТКУ, плитку** тротуарную, **керамзит, песок** в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 89033580679.

**253.КВАДРОЦИКЛ** новый, бензиновый. – 35000 руб. Т. 89276689839.

**295.Навоз, торф.** Т. 89613383011.

**317.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** навоз. Дёшево. Доставка. Т. 89278502821.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу, щебень,** керамзит, асфальтную **крошку,** бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**341.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 89030666630.

**351.ПЧЕЛОСЕМЬИ, улья, мёд.** Тел. 8-905-343-62-02.

**369.Гравмассу, песок** речной, карьерн., **щебень.** Т. 89520269954.

**370.**АКЦИЯ! **Грабли** /Турция/ пятиколесные – 26 т. р.; **косилку роторную** /Польша/ от 45 т. р. Доставка. Т. 8-937-956-00-54.

**372.Песок, гравмассу,** щебень, торф, навоз, **керамзит.** Доставка. Т.: 89603080854, 89170660480.

### УСЛУГИ

**250.Кровельные, фасадные** работы. **Монтаж** водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**367.Печник-профессионал.** Т. 8-927-862-94-85.

### РАБОТА

**368.Требуются:** сварщики, монолитчики, арматурщики, монтажники, плотники, разнорабочие, каменщики. Проживание, питание предоставляется. Оформление по ТК, соцпакет. Тел. /8352/ 37-85-75 /"АльянсГрупп"/.

**385.Требуются плотники.** Т. 483900.


*Ăслăлăх*

# Чăваш халăхĕн сумлă профессорĕ

***Леонид Павлович Сергеев – паллă чĕлхеçĕ, чăваш диалектологине тĕпчес ĕçĕн пысăк ăсти, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ /1974/, профессор /1981/, РФ тата ЧР ăслăлăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ /1990, 2001/, К.В.Иванов ячĕллĕ Патшалăх премийĕн лауреачĕ /1992/, Раççей Федерацийĕн аслă професси пĕлĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ /2000/, ЧР Патшалăх премийĕн лауреачĕ /2012/. Вăл шкул ачисемпе вĕрентекенсем валли хатĕрленĕ нумай-нумай кĕнекепе темиçе ăру ăс пухса пурнăç çулĕ çине тухнă, малашне те вĕренӳпе воспитани ĕçĕнче ăсчахăн ĕçĕсем хăйсен пĕлтерĕшне çухатмĕç.***



Л.П.Сергеев 1929 çулхи çĕртме уйăхĕн 3-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Çурлатăри ялĕнче çуралнă. Шăпи пылпа çу хыптарсах кайман ăна: пĕчĕклех амăшĕсĕр юлнă. «Манăн лексикăра «анне» сăмах пулман, – тет вăл хăйĕн çăмăл мар ачалăхне аса илсе. – Эпĕ ăна ас тумастăп». 1935-1939 çулсенче ялти пуçламăш, ун хыççăн Муркашри вăтам шкулсенче ăс пухать. 1945 çулта вăл Чăваш патшалăх педагогика институчĕн литература факультетне вĕренме кĕрет. Унта Леонид Павлович тăрăшса вĕренет. 1948 çулта виçĕ курс пĕтернĕ каччăна Муркаш районĕнчи Тойкилтĕ шкулне чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме яраççĕ. Çамрăк вĕрентекен шкул ачисен кăмăлне тивĕçтерес тĕллевпе радио, фото, литература, драма куржокĕсем йĕркелет. Хастар учителе малтан директора, унтан Муркаш районĕн çут ĕç пайĕн пуçлăхне çирĕплетеççĕ. Çак ĕçре вăл пĕтĕм вăйне хурать: шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатассишĕн те, кивĕ шкулсене юсанипе пĕрлех çĕнĕ çуртсем тăвассишĕн те, шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕрентессишĕн те...

Çав тапхăртах çамрăк педагог ăслăлăхпа тĕпчев енне ытларах та ытларах туртăнма пуçлать, диалектологи экспедицийĕсене кая-кая килет, ăслăлăх статйисем пичетлет. Çак туртăм пулас ăсчаха аспирантурăна илсе çитерет. Ăна пĕтернĕ хыççăн республикăри ăслăлăх тĕпчев институтне ĕçлеме килет, филологи наукисен кандидачĕн диссертацине ăнăçлă хӳтĕлет. Тĕпчев институтĕнче пултаруллă ăсчаха вăхăт иртнĕ май пысăкрах та пысăкрах должноçа куçараççĕ: кĕçĕн наука ĕçченĕ, аслă наука ĕçченĕ, пай пуçлăхĕ...

Чăваш чĕлхин калаçăвĕн уйрăмлăхĕсене туллин тĕпчес тесе Леонид Павлович Чăваш Республикинче çитмен вырăн хăвармасть. Тĕрлĕ çулта вăл Сарă ту, Пенза, Чĕмпĕр, Самар, Эрĕнпур чăвашĕсем патĕнче пулнă, Тутарпа Пушкăрт республикисене кайса унта пурăнакан чăвашсен калаçăвне, историне тĕпченĕ. 1972-1984 çулсенче Леонид Павлович РСФСР Çут ĕç министерствин Наци шкулĕсен наука тĕпчев институчĕн лабораторийĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ, чăваш шкулĕсем валли тăван чĕлхепе литературпа программисемпе учебниксем, тĕрлĕ вĕренӳ кĕнекипе пособине сахал мар хатĕрленĕ, филологи наукисен докторĕн диссертацине хӳтĕленĕ.

1979-1984 çулсенче пултаруллă ăсчах Чăваш лабораторийĕнче ĕçленипе пĕрлех педагогика институчĕн пуçламăш класс учителĕсене хатĕрлекен факультетĕнчи студентсене чăваш чĕлхи вĕрентет. Хальхи вăхăтра Л.П.Сергеев – педагогика университечĕн чăваш чĕлхипе литератури кафедрин профессорĕ. Студентсене тăван чĕлхен кунçулĕпе пуянлăхне паллаштарас тесе ырми-канми ĕçлет, аспирантсене хатĕрлет. Вăл 15 наука кандидачĕ хатĕрленĕ. Хăй тăрăшнипе уçăлнă чăваш диалектологийĕн лабораторине ăнăçлăн ертсе пырать.

Леонид Павлович 350 ытла тĕпчев ĕçĕн авторĕ. Чăваш чĕлхе пĕлĕвĕнче вăл тишкермен ыйту сахал пулĕ. Пирĕн вĕрентекенĕмĕр фонетика, лексикологи, фразеологи, лексикографи, сăмах пулăвĕ, морфонологи, морфемика, морфологи тĕпчессипе нумай вăй хунă, халĕ те тăрăшать. Эпир ĕçтешĕмĕрĕн çитĕнĕвĕсемпе мухтанатпăр, мăнаçланатпăр, ăна малалла та тухăçлă ĕçлеме вăй-хал сунатпăр.

Леонид Павловича халалласа çĕртмен 3-мĕшĕнче И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче «XX-XXI ĕмĕрсен хутлăхĕнчи наци чĕлхисемпе вĕсен диалекчĕсем: теори тата практика» ăслăлăхпа практика конференцийĕ иртĕ.

■ **Татьяна ДЕНИСОВА,**
**ЧППУ чăваш чĕлхипе литератури кафедрин ертӳçи**

*Кун-çул*

# Амăшĕн мухтавĕ – ывăлĕсем

***«Интернат – пурнăç шкулĕ. Унта ӳсмен тăк чемпион пулайăттăмши?» – çак шухăшпа канăçсăрланнă кире пуканĕ йăтас енĕпе тĕнче рекордне 11 хут çĕнетнĕ Сергей Кириллов. Чăннипе, çĕр-шыври тимĕр вăййипе туслисен пĕрлештернĕ командин тĕп тренерĕ тăлăх мар. Апла пулсан РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ мĕншĕн интерната лекнĕ-ха? Çак ыйтăвăн хуравне тупас тĕллевпех Куславкка тăрăхне çитсе килтĕм.***



***● Сергей Кириллов "Хыпар" парнисемшĕн иртнĕ турнир çĕнтерӳçипе призерĕсене саламлать. 2012 ç.***

Валентина Ивановнăпа, чемпионăн амăшне çапла чĕнеççĕ, ывăлĕн хваттерĕнче тĕл пултăмăр. Хăнасене /манпа пĕрле Сергей Кирилловăн пĕрремĕш тренерĕ Иван Краснов пычĕ/ кинемей кăмăллăн кĕтсе илчĕ. Ачисем аякра чухне хваттер пушă ларать пулин те пире вĕри чейпе тата кукăльпе хăналарĕ. Хăйне вăр-вар та хастар тыткаланăран çичĕ теçеткене çывхарать пулĕ тенĕччĕ, çук иккен. 1934 çулта çуралнăскер кăçал 80 çулхи юбилейне паллă тума хатĕрленет. Çак куна Валентина Ивановна чăтăмсăррăн кĕтет. Ун чухне инçетре пурăнакан ачисем килеççĕ-çке. Ахăртнех, вĕсене çупăрласа ыталас килет ватă çыннăн.

Куславкка районĕнчи Мĕниçырми ялĕнче çуралса ӳснĕ Валентина Кирилловăн пурнăçĕ çăмăл килмен. Хĕр ача 7 çулта чухне хаяр вăрçă пуçланнă, çавăнпа ăна та ытти ача-пăча пекех телейсĕр шăпа кĕтнĕ. Мĕн кăна курман, мĕнле кăна йывăрлăха чăтса ирттермен пулĕ. Пĕчĕклех ял халăхĕпе пĕрле кунĕн-çĕрĕн уй-хирте пилĕк авма тивнĕ. Çамрăклах ашшĕсĕр юлни пĕтĕм ĕмĕт-шухăша тĕп тунă. Пĕр вăхăт колхозра вăй хунă хыççăн хĕр Куславккари автофургонсем тăвакан завода вырнаçнă.

Çитĕнсен те ăна мăшăрпа пĕрле пурăнма тӳр килмен. Тăвата ывăла ӳстермешкĕн йывăртарах пулнă хĕрарăма, çавăнпа тăваттăшне те интерната вырнаçтарнă. «Тутă, ырă-сывă пулĕç унта шухăшларăм ун чухне, – иртнине аса илчĕ Валентина Ивановна. – Телее, ывăлăмсене патшалăх хӳтте илчĕ, вĕсем лайăх çын пулса çитĕнчĕç. Мухтав турра: пурте тĕрĕс-тĕкел пурăнаççĕ».

Асли Николай /1970/ – амăшĕн тĕревĕ. Сергей /1972/ çемйипе Санкт-Петербургра тĕпленнĕ. Мăшăрĕпе Иринăпа /вăл та Куславккаран, интернатра пĕрле вĕреннĕ/ пĕр ача çитĕнтереççĕ. Владимир /1975/ – подполковник, УФСИН тытăмĕнче ĕçлет. Хусан çар-медицина институтĕнчен вĕренсе тухнăскер çамрăк чухне футболист пулнă. Чи кĕçĕнни – Алексей /1978/, пиччĕшĕ пекех спортсмен. Кире пуканĕ йăтас енĕпе Раççей спорт мастерĕ, çарпа спорт институтĕнче пĕлӳ илнĕ. Халĕ Мускавра пурăнать.

Амăшĕпе пĕр хуларах пулнăран ывăлĕсем киле час-час хăнана çӳренĕ. «Кашни канмалли кун килетчĕç ачамсем, дачăра ĕçлеме пулăшатчĕç. Володя уйрăмах тăрăшуллăччĕ, вăл тума пĕлмен ĕç те çукчĕ. Сергей ертсе пыма юрататчĕ, виççĕшĕ те ун хыççăн çӳретчĕç. Пуринчен те пĕчĕкрех пулин те хастарччĕ, хăюллăччĕ, пĕтĕм çĕре кĕрсе тухма пултаратчĕ. Çавăнпах кире пуканĕ йăтма талпăнатчĕ, ыттисем унран тĕслĕх илетчĕç», – хĕпĕртесе калаçрĕ Валентина Ивановна. Тăваттăшĕ те туслă пурăннă, хирĕçесси сайра пулкаланă пĕр тăвансен. Халĕ те пĕр-пĕрне тĕл пулсан калаçмалли сахал мар вĕсен.

«Ывăлăмсем спортсмен пуласса шухăшламан та. Кире пуканне йăтма пуçланине пĕлсен те хирĕçлемерĕм: арçын ачан вăйлă пулмалла, Тăван çĕр-шыва хӳтĕлемелле тесе пиллерĕм. Маттур, ăслă-тăнлă вĕсем, мухтанатăп ачамсемпе. Хăйсен ĕмĕт-тĕллевне пурнăçласа ĕçре ырă ят илчĕç», – сăмахне малалла тăсрĕ кинемей. Анчах ватă çынна ывăлĕсен çемье пурнăçĕ ăнманни пăшăрхантарать. Пĕртен пĕр мăнукĕ Егор /Сергей Кирилловăн ывăлĕ/ асламăшне телей парнелет, 5-ри шăпăрлана курсан ăна ачашламасăр, çупăрламасăр чăтаймасть.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

**Пĕлме** *Сергей Александрович КИРИЛЛОВ – кире пуканĕ йăтас енĕпе СССР спорт мастерĕ /1991/, спортăн тĕнче класлă мастерĕ /1995/, Раççей спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ /2004/. Чăваш Ен чемпионĕ, çĕр-шыв кубокĕн çĕнтерӳçи /1997-1999, 2007/, Раççей чемпионĕ /1999, 2000/, тĕнче кубокĕн призерĕ тата çĕнтерӳçи /1998-2002/, тĕнче чемпионĕ /2004/. Ленинград çар институтĕнчен вĕренсе тухнă /1994/, хула çар округĕн спорт клубĕн аслă тренерĕнче ĕçленĕ, халĕ – РФ пĕрлештернĕ командин тĕп тренерĕ.*

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕ Чăваш АССР Аслă Канашĕн вун пĕрмĕш суйлаври депутачĕ /1985-1990/, Чăваш АССР ял хуçалăх министрĕн çумĕ /1986-1991/, «Чебоксарские семена» акционерсен хупă обществин генеральнăй директорĕ /1991-2006/

**Илья Владимирович НЯГИН**

вилнĕ пирки чĕререн хурланнине пĕлтерет.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ Чăваш АССРĕн вун пĕрмĕш суйлаври Аслă Канашĕн депутачĕ

**Илья Владимирович НЯГИН**

вилнĕ пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланнине пĕлтерет.

Патăрьел район администрацийĕ райĕçтăвком председателĕ /1976-1985/, Ленин орденĕн кавалерĕ, РФ Ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

**Илья Владимирович НЯГИН**

вилнĕ пирки унăн çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланнине пĕлтерет.

ЧР ял хуçалăх министрĕн çумĕ /1986-1991/, Чăваш АССРĕн Аслă Канашĕн депутачĕ /11 суйлав/, явапллă тĕрлĕ ĕçре нумай çул чыслăн ĕçленĕ

**Илья Владимирович НЯГИН**

вилнĕ пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле чун-чĕререн хурланнине пĕлтеретпĕр.

**Платоновсен çемйи.**

Чăваш Республикин Аслă сучĕ, Суд департаменчĕн Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри управленийĕ, районсен тата Çĕнĕ Шупашкар хула сучĕсен судйисем, Чăваш Республикин миравай судйисем Чăваш Республикин Патăрьел район сучĕн отставкăри судйи

**Николай Васильевич ТАРАСОВ**

вилнĕ пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.


чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор служби Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /явапллă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.Н.БАГАДЕРОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, явапллă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем явапллă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7481. Заказ 1988.